Y1-307
3047

Нестер Янкас

# ИККĔМĔШ ПАРНЕ

Чăвашгосиздат
1941

НЕСТЕР ЯНГАС

# ИККЁМЁШ ПАРНЕ

★

*САВАСЕМ*

ЧАССР
ГОСУДАРСТВО
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ● 1941

## УМСӐМАХ

Чун юрри, чӗре юрри
Тараватлӑн таврана
Юхтӑр-и,—
Халӑхсемшӗн яланах
Пурнӑç гимнӗ пултӑр-и.

Чун юрри, чӗре юрри
Пархатарлӑн таврана
Юхтӑр-и,—
Ӗççыннишӗн яланах
Ӗç юлташӗ пултӑр-и.

Чун юрри, чӗре юрри
Ӑрӑскаллӑн таврана
Юхтӑр-и,—
Савнисемшӗн яланах
Ырӑ евчӗ пултӑр-и.

Чун юрри, чӗре юрри
Вашаватлӑн таврана
Юхтӑр-и,—
Ачасемшӗн яланах
Ӑслӑ няня пултӑр-и.

Чун юрри, чĕре юрри
Аслати пек таврана
    Кайтăр-и,—
Тăшмана вăл яланах
Çаптăр,—çиçĕм пултăр-и!

1940.

# I
# ÇĂЛТĂР

# ЭТЕМ

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.
К. Иванов.

Рехмет, çĕнелнĕ çĕр-анне,
Çĕн çăкăрна çитернĕшĕн,—
Хăв ывăлна çут тĕнчене
Хăват парса вĕçтернĕшĕн!

Çÿрерĕм ăмăрткайăк пек
Эп пархатарлă çĕр тавра.
Нихçанхинчен те лайăх, шеп
Тăван çĕршыв ман таврара!

Кунта паян эп чăн хуçа,
Кунти пуянлăх пурте ман.
Çăлтăрсенчен венок туса,
Чысларăм эп кунта хама!

Тĕнче курман капмар çурта
Хăпартрăм эп тĕнче умне.
Хăй вырăнне пĕлмен сăрта
Куçартăм тивĕç вырăнне.

Çĕре анман пĕлĕтсене
Антартăм йышлăн сĕтĕрсе,—
Минтер пек мăнтăр çĕр çине
Çутартăм ăшă çăмăрсем.

Анаталла юхан шыва
Юхтартăм вăйлăн тăвалла.
Таса мерчен-ахахпала
Эп эрешлерĕм çĕршыва.

Хĕвел шевлийĕ пек вĕсем —
Эп çутнă йăлтăр çутăсем.
Сĕрен-кĕперĕ пек вĕсем —
Эп хывнă кĕмĕл кĕперсем!

Мĕнпур илемĕпе çиçсе,
Ялтрать умра ман çĕн тĕнче.
Канаççĕ ылттăн пĕлĕтсем
Ман сарлака кăкăр çинче...

Вĕри хăватлă алăра
Эп ирĕлтертĕм Çурçĕре.
Ялан янравлă юрăра
Мухтарăм ешĕл çĕн çĕре.

Телейлĕ пулчĕç ман юрра
Чĕре ăшне хывакансем,
Хăлхасăр пулчĕç ман юрра
Илтмĕш пулса тăракансем!

Тăван çулпуç, çĕршыв-анне,
Рехмет сире ӳстернĕшĕн,—
Çăтмах пек çутă тĕнчене
Хăват парса вĕçтернĕшĕн!

1940.

## ТĂВАНА ТУПНИ

Рехмет сана, тăван анне,
Кăкăр сĕтне ҫитернĕшĕн,—
Хăв ачуна ӳсичченех
Ҫут тĕнчене вĕҫтернĕшĕн.

Рехмет сана, тăван атте,
Янравлă ҫупкă-тапкăшăн,—
Йĕре-йĕре ют ҫын патне
Хăв ывăлна ăсатнăшăн.

Рехмет сана, тăван пичче,
Ман асапа чухланăшăн,—
Сăмахлă ҫăкăр таткине
Пĕрле хуҫса пайланăшăн.

Рехмет сана, ват асанне,
Чеен юмах юптарнăшăн,—
Айван мăнукăн чĕрине
Ҫут ĕмĕтпе ҫунтарнăшăн.

Рехмет сана, тăван аппа,
Каҫхи кичемлĕ юррусемшĕн.

Сан юрруна — сан асапна
Аса илме те йывӑр темшӗн...

Рехмет сана та, асатте,
Сӗм каҫсенче йӑпатнӑшӑн, —
Хӑв тунӑ хаксӑр теттепе
Ача чунне хускатнӑшӑн.

Рехмет, мерттес, тӑванӑмсем!
Сире ман йывӑр айӑп ҫук.
Ҫуралтӑм эп ҫынҫиенсем
Ман ҫӗршывра алхаснӑ чух.

Сире каҫартӑр халь ҫулпуҫ,
Хӗнхур таптанӑ этеме
Вӑл пачӗ ҫӑкӑр, пачӗ куҫ...
Вӑл — ӗмӗрлӗх атте-анне!

1940.

## ПЕТРО

Пуян боярин çуртĕнче
Петро батрак пулса ĕçленĕ.
Надсмотрщик хушнă ĕçсенчен
Вăл пăрăнман,—ĕç пултăр!—тенĕ.

Батрак!—вăл пăхнă йытă та,
Вăл вырнă, çапнă тырă та,
Вăл татнă, çурнă вутă та...
Петро ĕçленĕ йывăр ĕçĕн
Нихçан та курăнман-çке вĕçĕ!

Хĕвел теес, хĕвелĕ те
Канма юратнă каçхине,—
Днестр çинчен çĕкленнĕ те
Анса çухалнă Прут хыçне.

Эх, пархатарсăр çут тĕнче!—
Петро боярин çуртĕнче
Нихçан та канлĕн канайман,
Нихçан та ăшшăн çыврайман.

Тăп-тăпăл пичĕ—пĕрлĕхен,
Хăп-хăмăр куçĕ—хурлăхан,—

Чипер Петро!—мӗн пӗчӗкрен
Мӑн ҫын пек тӳснӗ хурлӑха.

* * *

Инҫе пулман мӗн чикӗрен
Пуян бояринӑн керменӗ,—
Хаваслӑх пурӑннӑ лере,
Кунта асап асса ҫӳренӗ.

Кӑшт аслӑрах батраксенчен
Петро ӑс илнӗ хушӑран,—
Вӑл пӗлнӗ: Днестр леш енче
Ҫынсем пӗлмеҫҫӗ пусмӑра.

Вӑл илтнӗ: Днестр леш енче
Батрак та ҫук, боярин та...
Хресчен темле колхозсенче
Шеп пурӑнать иккен унта!

Вӑл пӗлнӗ: Днестр леш енче
Кулач та пур мӗн, иҫӗм те...
Уҫах мӗн алӑк шкулсенче
Унта хресчен ачишӗн те.

Вӑл илтнӗ: Днестр леш енче
Йӑлт урӑхла иккен тӗнче!
Румын капралӗ сисиччен,
Аванччӗ пит унта ҫитсен!

Петро сăнанă ир те каç:
«Ав, Днестр урлă кайăксем
Ирĕклĕнех вĕçсе каçаç...
Вĕсемшĕн çук-çке чикĕсем?..»

Петро хурланнă ир те каç:
«Юнашарах пускил çĕршыв,
Çунат пулсассăн—вĕç те каç!
Мĕн-ма Петро çунатсăр-ши?
Мĕн-ма Петро хăлат мар-ши?..

Эх, пархатарсăр самана!
Мĕн-ма Петро телейсĕр-ши?..»—
Çăтмах пек илĕртнĕ ăна
Сенкер шыв леш енчи çĕршыв,—
Чăн-чăн çăтмах пек çĕн çĕршыв.

* * *

Пĕрре боярин çуртĕнче
Хаваслăн батраксем шавланă:
«Боярин ăшă йăвинчен
Вĕçнĕ!» тесе, сăмах ваклана...

Çак самантрах Днестр çинче
Штыксем шевле пек ялтăранă...
Ку—хай пускил çĕршыв енчен
Хăватлă Хĕрлĕ Çар çывхарнă.

Ку—килнĕ аслă Сталин çарĕ,
Асаплăх чиккине ватса.

Ахаль тарман иккен боярин
Ăш йăвинчен пуç çухатса!

* * *

Нумай пулмасть Петро çинчен
Хыпар эп илтĕм инçетрен:
Петро халь ĕнтĕ пионер,
Петро пуриншĕн те пример.

Тăп-тăпăл пичĕ—пĕрлĕхен,
Хăп-хăмăр куçĕ—хурлăхан,—
Чипер Петро!—çĕн чикĕрен
Каçармĕ тек вăл хурлăха!

1940.

## ВУНВИÇÇӖМӖШ

Гвозди б делать из этих людей:
Крепче б не было в мире гвоздей.
Н. Тихонов.

Снаряд тӳнтернӗ хыр çумне
Шаккарӗ вӑл йӗс чӗлӗмне.

Тӑрук хӑпартрӗ сассине:
«Команда, йӗлтӗрсем çине!

Задани йывӑр. Хӑшӗн, тен,
Çемьи те пур... пӗри вилсен,

Тепри ӑна ан мантӑрччӗ.
Отряд, налево! Ман хыçран!»

«Есть, командир!»—вунвиç боец
Хӑлат пек ярӑнса вӗçеç.

Кӑчӑртатать юр·кӗленче
Сивлеккӗн йӗлтӗр айӗнче...

Сасартӑк, вӑрӑ пек, тӑшман
Йӑшаланса тухать таçтан...

Янрать хаяр приказ: «Пер, кас!..»
Тем ахлатать вăрман пĕр кас...

Тем ахлатать те—чарăнать.
Çӳлте сар уйăх ярăнать.

Тӳлек те шăп касхи тĕнче...
Юнпа хĕрелнĕ юр çинче
Вуникĕ çăлтăр вут тăкать,
Утмăл кокарда тутăхать.

Вунвиççĕмĕш кăна штаба
Çитетваскавлă хыпарпа.

1940.

## ПУРТĂ

Сайхалăх хыçĕ. Курите.
Выртать унта пĕр катăк пуртă.
Хуçи калать: «Çĕнниййĕ пур та,
Кăна тытмастпăр, выртгăр теп.

Музей илмест. Ку пуртăпа
Эпир вунçиччĕмĕш çулта
Çĕр юпине вакланăччĕ,
Улпут пуçне те... татнăччĕ!»

1910.

# ÇĂЛТĂР

Мажит Гафурирен

Шавлă çичĕ тинĕс урлă,
Çичĕ чăнкă сăртпалан
Kaçрăм-тухрăм эпĕ. Хурлă,
Йывăр пулчĕ çулăм ман.

Канлĕхе эп юратмарăм,
Хӳтлĕх кăчăк туртнинчен
Тартăм, — çăлтăр çухалмарĕ
Манăн аслă çул çинчен!

1940.

## ЯЛАВ

Мажит Гафурирен

Утатăп эп. Чакмасть вăйхал.
Пăхатăп çаврăнса хыçа.
Хыçра — хăюллă та кал-кал
Утать ман халăх юрласа.

Çул çутă та — тумхахлăрах.
Çитейĕп-ши çитес çĕре?
Çук, ывăнсассăн та чĕрем,
Ялавăм юлĕ алăрах!

1940.

## ВĂРÇĂ ВИТĔР

*Семен Эльгере*

Вал хыççăн вал, хум хыççăн хум
Йăваннă,—кимĕ ваннă сан.
Çӳçеннĕ юн. Ыратнă чун...
Шав малаллах—кун хыççăн кун
Эс пурпĕр ишнĕ талпăнса.

Эс пынă пурнăç çыранне.
Кĕрленĕ тинĕс—самана.
Таткаласа ун кĕрлевне,
Асамлăн йыхăрнă сана
Хăвна çуратнă çĕр-анне.

Уленĕ, ахăрнă тĕнче...
Хăрушă хĕç пек, пуç çинче
Алхаснă çиçĕм вĕçĕмсĕр...
Эс пурпĕр ишнĕ... Мал енче
Час курăнман-çке кĕтнĕ çĕр.

Час курăнман вăл... Тăн-пуçра
Тĕтреллĕ шанчăк сӳнеспе,
Инçе те мар-çке, çывăхрах,

Юмах пек, аслă пурнăç пек,
Çыран çĕкленнĕ тухăçра.

Çĕкленнĕ çĕр! Çĕкленнĕ чун.
Эс саламланă çĕн куна.
Çак самантра юлашки хум
Турпас пек йăтнă та сана,
Çиллессĕн пенĕ çырана.

Эс выртнă ăшă çĕр çинче,—
Хускалнă пурнăç чĕрере...
Аран тăрса, тăван çĕре
Чуптунă эс йĕре-йĕре...
Ӳленĕ тинĕс кай енче.

Çапла, шывпа вут витĕр те,
Эс тухнă çĕнĕ тĕнчене.
Пусмăрлăха эс суд умне
Тăратнă. Приговор айне
Кашни ал пуснă пирĕнтен!

1940.

II

# К Ă М Ă Л

## КĂМĂЛ

Эсĕ сар хĕвел пулсан,
Çăлтăр çеç пуласчĕ ман,
Çăлтăр çеç пуласчĕ ман,—
Çумăнта куллен, ялан
Çуталса тăрасчĕ ман.

Эсĕ çӳлĕ ту пулсан,
Пулаясчĕ пĕлĕт ман,
Пулаясчĕ пĕлĕт ман, —
Пĕр сана кăна ялан
Канлĕн ыталасчĕ ман.

Эс çеçен тирек пулсан,
Варкăш çил пуласчĕ ман,
Сулхăн çил пуласчĕ ман, —
Шăрăхпа усăнасран
Хăтарасчĕ сана ман.

Эс пылак çеçке пулсан,
Пулаяс пылхурчĕ ман,
Пулаяс пылхурчĕ ман, —

Пĕр сана кăна ялан
Тутлăн чуптăвасчĕ ман.

Эс хаяр кăвар пулсан,
Сивĕ шыв пуласчĕ ман,
Пăрлă шыв пуласчĕ ман,—
Тĕлкĕшсе кĕл пуласран
Хăтарасчĕ сана ман!

1939.

## ПУРНĂÇ ЮЛТАШНЕ

Кимĕ хатĕр. Çирĕп лар эс.
Хумсенчен те ан çӳçен.
Ěмĕт пирĕн пултăр парăс,
Туслăх пултăрччĕ кĕсмен.

Урăм-сурăм çил тухсассăн,
Вăхăт пулмĕ тен канма,—
Эпĕ ишĕп... Ывăнсассăн
Пулăш эсĕ те мана!

1940.

## ХАЛАЛ

Чечек çеçке çурать, ăна
Тăпра парать хăй сĕткенне.
Çаплах çĕршыв та халь сана
Сĕнет ыр пурнăç шерпетне.

Ĕçех ăна! Юрат мана...
Анчах çĕршыв тивĕçĕнчен
Ан тух нихçан та. Яланах
Таса пул халăх йышĕнче!

1940.

## КĂМĂЛ ТУРТĂМĚ

Темскер кĕтетĕн эс манран,
Тем йăлăнатăн тилмĕрсе...
Шухăшусем те шухă сан,
Виçесĕр выçă куçусем.

Тăванăм, ытлашши ан çун,
Упра эс кăмăл туртăмне.
Пурăнăçра чарусăр чун
Ир çухатать хăй ăшшине.

1940.

# ЮРАТСАН

Ан вăтан, ан ютшăнсам,—
Йăлтăр мар, тесе, куллу.
Тăрă çăл пекех таса
Сан чĕрÿ, чун-кăмăлу.

Евчĕ хамăрах ку чух!
Юратсан чун-чĕрепе
(Хулăм ыйтмĕç—хуйхă çук!)—
Хăнчăр куç та çăлтăр пек!

1940.

# А С А Т У

Ешер, хаваслăх! Ăшшăн çу,
Чун çăмăрĕ—таса куççуль!

Йĕрес килет. Куççуль тухмасть.
Пĕлетĕп: кирлĕ мар йĕрме.
Халь нимĕн те пусараймасть
Тулса капланнă чĕреме.

Каятăн эс инçе-инçе...
Ан ман... Упран инкексенчен.
Кам юратать—çав нумайччен
Кăвар усрать хăй чĕринче!

1940.

# САВНИ

Мажит Гафурирен

Ӑна эп кӗтрӗм. Вӑл тухмарӗ.
Кӳрентӗм. Утрӑм таҫталла...
Кӗҫех умра тем ялтӑрарӗ,
Ярах уҫса утмаҫула.

Хӗвел-ши ку?—вӑл ӗнтӗ аннӑ.
Ҫӗн уйӑх-ши?—вӑл тухайман.
Ку—хай кӗттернӗ тусӑм манӑн
Кулса анать иккен туран!

1940.

## ТЕН АХАЛЬ МАР...

Хумхантарать йӗкӗтсене
Тӳп-тӳрӗ пӳ, тăп-тăпăл пӳ...
Тен ахаль мар хапха умне
Çурта пек хурăн лартрăн пуль,
Юратнă тусăм?

Çырла-питсем! Вӗсем çине
Ӳкеççӗ ют куçсем ялан...
Тен ахаль мар крыльца умне
Лартса ӳстертӗн пуль палан,
Юратнă тусăм?

Кăвак куçсем! Çамрăк чӗрем
Хăрать вӗсем тӗс тăкасран...
Тен ахаль мар кăвак сирень
Ӳстертӗн пулӗ пахчара,
Юратнă тусăм?

Кăчкă-çӳçсем! Вӗсем çине
Хăратăп эп юр çăвасран...
Тен ахаль мар садваррине
Сар хӳшӗ аврăн хăваран,
Юратнă тусăм?

1939.

## ÇЫРЛАРА

Çунать кăвар пек хĕмленсе
Хăмла-çырлисемпе сăрт-ту.
Çăраката сулхăнĕнче
Çўрет хăватлă юрату.

Çўрет хĕр. Такама кĕтет.
Пушах чĕресĕ алăра.
А-у! — хăлат пек йĕкĕте
Кĕтсе илет вăл чăтлăхра.

Ачашшăн, пĕчĕк ачалла
Чăмать хĕр йĕкĕт ытамне...
Мăшăр кăкри — мăшăр çырла
Пиçсе тухать тĕнче умне...

Кăвар пек хĕмленсе çунать
Хăмла-çырлисемпе сăрт-ту...
Вăрлăхĕнчен телей кăна
Ўстертĕрччĕ ку юрату!

1939.

## КИЛМЕН САЛАМСЕМ

Халь мĕнлерех-ши эс?.. Сăнна
Ĕнтĕ кунçул тĕтри хуплать.
Ĕнтĕ ачаш яту кăна
Ман асăмра хăналанать.

Папка кăларчĕç çичĕ хут
Ĕнтĕ эс лартнă тирексем.
Санран килмерĕ ăшă хут,
Килмерĕç кĕтнĕ саламсем.

Халь тин кĕтни те кăлăхах:
Шуралчĕç ĕнтĕ тăнлавсем...
Эпир таптанă сукмака
Таптаççĕ ĕнтĕ шăллăмсем!

1940.

# А Ч А

Выляç хумсем. Мăшăр çыран
Лăпкать сăпайлăн вĕсене.
Саватпăр ак мĕн сăпкаран
Эпир те хамăр пепкене.

Мăшăр çыран пек эпĕр те:
Такам шуйттанĕ-çке пире
Самантлăх пĕрлештерчĕ те—
Хăварчĕ тăвăл чĕрере!

Халь акă чунăм ыратать:
Эс чĕптĕм те савман мана.
Ача?!—пире вăл юратать,
Вăл ăнланмасть сан айăпна.

1940.

## ЧЁМСЁРЛЁХ

Пӗр сехет те иртрӗ пуль,
Иртрӗ пулӗ иккӗ те,—
Калаçу ӑнмасть. «Сывпул!»
Тет хӗр чӗмсӗр йӗкӗте.

«Чим» е «сывӑ пул» теме
Йӗкӗт хӑяймасть темме...

Вӑл тӑрать шыв сыпнӑ пек.
Хӗр каять. Ун хыçӗнчен,
Вуламан страница пек,
Алӑк хупӑнать хуллен.

1940.

## ИКĔ САВĂ

1.

Паллашрăмăр, туслашрăмăр
Эс юталла куç хывиччен.
Вара (йăла!?) харкашрăмăр
Чĕре тулса тăкăниччен.

Лăплантăм эпĕ. Чун тӳлек,
Çил хыççăн каннă кӳлĕ пек.

Сан хаксăр сăвă пек яту
Хускатмĕ тек ман чĕрене.
Пĕрре çухалнă юрату
Тепре килмест çут тĕнчене.

2.

Паллашрăмăр, туслашрăмăр,
Ялан пĕрле те çӳремен.
Юратрăмăр, калаçрăмăр,
Ни сав темен, ни кĕвĕçмен.

Тăванăмçăм, çĕршыв хитре!
Шевле çиççе вылять питре!

Аван пире! Чунна ан хуç:
Сан куç сенкер, ман çӳç хура:
Хура çӳçпе хай сенкер куç
Çуралтăр, хамăра кура!

1940.

## ЯТ ХУНИ

Манӑн туссем кӗрекере
Шакка-шакка черкке йӑтаҫҫӗ:
Вӗсем ман пӗчӗкҫӗ хӗре
«Шыва кӗртеҫҫӗ»—ят хураҫҫӗ.

*Нарспи* хурасчӗ, тет Кӑлган;
Шавлы шавлать—ӗҫет *Телейшӗн.*
Эльгер: кӑтартӑр, тет, малтан!—
Вӑл хӗрӗ мӗнлине пӗлесшӗн.

Алла илетӗп эп хӗре,
Ӑна тӗнче умне ҫӗклетӗп.
Шӑпланчӗ шав кӗрекере.—
Эп—ашшӗ унӑн, итлӗр!—тетӗп.—

Хӑйӗн пурнас кунҫулӗ пек
Илемлӗ пултӑр унӑн ячӗ.
Ӑш кӑнтӑрта ӳсет чечек,
Ун ҫеҫкисем вут пек ҫунаҫҫӗ!

Пӑхсамӑр эсӗр хӗр ҫине,—
Ӑна хӗвел юратмалла!
Телейлӗ аслӑ тӗнчене
Вӑл кӗтӗр *Роза* ятпала!

1939.

## САПКА ЮРРИ

Улăха канмашкăн анчĕ
Ентĕ ырнă кайăкхур.
Чиперккем, куçна хупсамччĕ,
Тĕлĕр, тутлă тĕлĕк кур.

Ӳсĕн харсăр. Кăтраланĕ
Сарă çӳç илемлĕн сан...
Чупăн униче-çаранăн,
Пĕчĕк трусик тăхăнса.

Шкул çулне çитсен туянĕ
Сан валли аçу букварь.
Пурнăçа тухас çул санăн
Çутă, такăр, тăвăр мар!

Ӳсĕн те, кăвар пек галстук
Çакăн кăкăру умне,
Чăрсăр çил ăна хаваслăн
Вĕлкĕштерĕ ик енне...

Кайăкхур пек иртĕç хăвăрт
Пархатарлă кун-çулсем.
Калăн эс: «Аннеçĕм, тăвăр
Эс çĕленĕ кĕпесем!»

Йывăр ăсату куççулĕ,—
Эсĕ кайăн хулана.
Кĕрĕ çавăтса ĕç шкулĕ
Аслă тĕнчене сана.

Тен эс поездсем çӳретĕн,
Харсăр машинист пулса..
Тухăп çул хĕррине эпĕ,—
Иртĕн ăшшăн ал сулса.

Хăнана пыма пĕлтерĕн...
Тăхăнăн хура шинель,—
Эпĕ çитĕп те, тинкерĕп
Куç илмесĕр сан çине!

Савăнăç куççулĕ хаклă,—
Эпĕ йĕрĕп,—эс мана
Чуптуса ачашшăн калăн:
«Тавтапуç, аннем, сана!»

«Пурăн!» тейĕн те, ăсатăн
Çывăх станцăра мана.
Эпĕ юлăп... Çил-çунатăн
Эс вĕçтерĕн малалла...

Мускавран сана саламлĕ
Ĕçӳсемшĕн комиссар.
Тĕлĕр тутлăн, çывăр канлĕн,—
Халĕ эс машинист мар.

Пуласси сан çутӑ, ырӑ,
Чун тӗпренчӗкӗ, пепкем.
Эп хайланӑ çакӑ юрӑ
Чӑнлӑха та тухӗ тен!

1941.

## ÇЫВĂХ ТУС

Акăш пек, тееç сана;
Акăш сарă кĕркунне
Ăсанать кăнтăр енне.
Çывăх эсĕ яланах, —
Танлаштармăп нимĕнпе,
Улăштармăп нимĕнпе
Эп сана!

Тополь пек, тееç сана;
Тăкăнаççĕ вĕл-вĕçсе,
Çулçисем ун, кĕр çитсен.
Эс кĕрнеклĕ яланах, —
Танлаштармăп нимĕнпе,
Улăштармăп нимĕнпе
Эп сана!

Уйăх пек, тееç сана;
Çухатать-çке ир енне
Уйăх сивĕ çуттине.
Эс типтерлĕ яланах, —
Танлаштармăп нимĕнпе,
Улăштармăп нимĕнпе
Эп сана!

Кайăк пек, тееç сана;
Юрламасть-çке кĕр енне
Кайăк капăр юррине.
Эс хаваслă яланах, —
Танлаштармăп нимĕнпе,
Улăштармăп нимĕнпе
Эп сана!

1940.

# С Ă В Ă

Халăх юррисенчен

1.

Ай, шăнкăрчă, шăнкăрчă,
Шăнкăр саслă шăнкăрчă!
Ним туса та таврăнмарĕ,
Йăва тусан—таврăнчĕ.

Ай, телейĕм, ай, телей,
Ĕмĕр кĕтнĕ чăн телей!
Ним туса та тупăнмарĕ,
Колхоз тусан—тупăнчĕ.

2.

Ай, чĕкеçĕм, ай, чĕкеç,
Чĕвĕлти чипер чĕкеç!
Ним туса та таврăнмарĕ,
Кашта тусан—таврăнчĕ.

Ай, савниçĕм, ай, савни,
Чунçунтармăшĕ савни,
Ним туса та çаврăнмарĕ,
Медаль илсен—çаврăнчĕ.

1940.

## К А Н Ă Ç

Кĕр калчи кашма пек. Тÿперен
Кашласа иртеççĕ тăрнасем.
Янăрарĕ сывлăш,—кÿлĕре
Сÿс чÿкеççĕ шавлăн инкесем.

Пăрăнатăп çул çинчен: калча
Шăп та шай ура сыппи таран!
Сăрт çинчи вăрманĕ улача,
Сар хĕрсем çÿреççĕ кăмпара.

Кĕр çĕртми чуста пек кăпăшка,—
Тулĕ тепĕр кĕр каллех пÿлме!
Пыл пек тутлă ĕмĕт-шу хăшпа
Харсăр пуç тулать, хуйха пĕлмест!

Чун тÿлек. Çанталăк та тÿлек.
Вăйăма ниçта хума та çук,—
Их!—чупса пăхатăп... Тен кун пек
Ĕрĕхсе чупман-тăр пĕчĕк чух!

Кепкăна кăшт чалăшрах лартса,
Таврăнатăп канлĕн эп яла.
Кÿршĕ хĕрĕ, ăшшăн йыхăрса,
Хăналать мана сим-пылпала.

1940.

## КĔРХИ САВĂ

Уяр кĕр кунĕ. Çеçкере
Ларать пас тытнă пек сирень.

Пăхсам, тăванăм: çуркунне
Çурманччĕ-шим вăл çеçкине?

Çаплах: раскаллă кун пулман
Октябрьччен пĕрре те ман.

Шуралчĕç ĕнтĕ тăнлавсем, —
Çапах та çамрăк-çке чунсем!

Мĕскер çитмест тата пире? —
Çĕкле пуçна эс çӳлерех!

Хаваслă пурнăç юррипе
Утма питех те ырă, шеп!

1940.

# САРĂ ХĔР

## ЛЕГЕНДА

Мажит Гафурирен

Пĕр ялта тахçан-авал
(Астумастăп ĕнтĕ халь)
Ӳснĕ тет пĕр сарă хĕр,
Сар чечек пек сарă хĕр;
Уснĕ тет хăй хăмăш пек,
Утнă тет хуракăш пек.
Çӳçĕ йĕтĕн сӳсĕ пек,
Çырă куçĕ çăлтăр пек
Йăлтăр! йăлтăртатнă тет,
Чĕрене хускатнă тет!

Шăрантарнă тет юрра
Шăпчăк пек вăл вăййăра.
Ташлатсан—ташланă тет,
Пăрчăкан пек сикнĕ тет;
Вылятсан—выляна тет,
Шăнкăрав пек кулнă тет.

Ашшĕ-амĕш кăмăлне,
Сарă хĕрĕн телейне—

Питĕнче ун пит те шеп
Пĕчĕкçеçĕ турпалли
(Каччăсемшĕн чунилли!)
Чăн мерчен пек çиçнĕ тет.

Вăйă хыççăн каçсерен
Пĕр сар каччă çак хĕре
Ăшшăн калаçтарнă тет,
Хушăран култарнă тет,
Хушăран вылятнă тет,
Хушăран чуптунă тет.
Турпалли пĕр самантa
(Ĕненме те йывăр та)
Сÿннĕ тет, çухалнă тет—
Тутапа хупланнă тет.

Курнă тет çакна пĕрре
Ватă уйăх тÿперен;
Курнă тет вăл,—суяс мар!—
Пĕр хут мар-ха, ик хут мар,—
Курнă тет вăл каçсерен
Сарă каччă сар хĕре
Вылятса култарнине,
Ăшшăн калаçтарнине...
Курнă тет, çиленнĕ тет,
Сар хĕре ăмсаннă тет:
«Чим-ха акă, эпĕ те
Чиперленĕп!—тенĕ тет.—
Турпаллиллĕ, пит те шеп
Сар хĕр пулăп!» тенĕ тет.

Вӑрттӑн-вӑрттӑн шӑвӑнса,
Хӗрелсе те вӑтанса,
Хайхискер пӗр касхине
Аннӑ тет пӗр ял ҫине.
Аннӑ тет те, чӑмнӑ тет
Хӑрӑмлӑ мӑрье ӑшне...

Те суя ку, те чӑнах,—
Уйӑх сар хӗре пулах
Пысӑк намӑс курнӑ тет,
Пӑсӑк питлӗ пулнӑ тет.

Ҫавӑнтан вара нихҫан,
Тӳпене-мӗне тухсан,
Сӑнаман тет хӗрсене,
Кӗвӗҫмен тет вӗсене.

Тӗлӗрсессӗн ҫут тӗнче,
Ҫамрӑксем ун ҫуттинчех
Пӗр-пӗрне юратнӑ тет,
Пӗр-пӗрне чуптунӑ тет,—
Уйӑх курмӑш пулнӑ тет,
Пит-куҫне хупланӑ тет,—
Хӗрӗн ашшӗ-амӑшне
Пӗлтермен тет хӗр ӗҫне,—
Элекҫей пек элекҫӗ,
Ультиван пек ултавҫӑ
Нихӑҫан та пулман тет,
Тухнӑ тет те, аннӑ тет.

1940.

## ӖМӖТ

Почтальон. Сенкер конверт
Адресат патне ҫитет:
Сарă хĕр ҫыру илет,
Савнă тусĕнчен пулас.
Йăпанать хĕр, хĕр хавас,—
Те йĕрес ун, те кулас...

Эп телейлĕ пулăттăм,
Йĕрĕттĕм те кулăттăм,—
Чуншăн ҫывăх сăввăма
Савнă ҫĕрĕм-шывăм ман,
Сарă хĕр пек савăнса,
Тараватлăн йышăнсан!

1939.

# III

# ФЕЛЬЕТОНСЕМ

## «СТАНЦĂСЕМПĔ» «ПРИСТĂНЬСЕМ»

Влас Петрович — склад хуçи
Пултаруллă, лăпкă çын.

Таварсем илсе тăрать, —
Хушнă — тунă, пултарать!

Пристăне е станцăна
Васкатать завмаг ăна:

«Çитнĕ пуль, — тет, — çĕн тавар,
Турттарар, суту тăвар!»

Склад хуçи: «Эп, — тет, — хавас!
Турттарас, суту тăвас!»

Акă, ывăтса алла,
Ыткăнать вăл тăвалла.

Ресторан тĕлне çитет, —
Пыр чăтма çук йĕкĕлтет...

Кантăк алăк уçăлать —
Влас Петрович çухалать.

Какăрсах ĕçет сăра
Вăл пĕрремĕш «станцăра».

Шухăшлать хăй: «Уссăр ман
Ма танккас виç çухрăма?

Çаврăнас та почтăна,
Трубкăпа пуплес кăна!»

Ак вăл почтăна çитет —
Станцăпа ун ĕç пĕтет.

Кĕç пĕр пĕ-ĕчĕк шыв хĕрне
Чарăнать вăл «пристăне»...

Чăн та, «пултаруллă» çын
Влас Петрович — склад хуçи.

Хисеплет завмаг темме
Çав ултавçă этеме.

Хам пулсан, «вăрман касма»
Эп ăсатăттăм ăна!

1940.

## ПЁР-ИК САМАХ ВĂРМАН ÇИНЧЕН

Манăн сăвăра паян
Кашласа ўсет вăрман.

Ешĕл çĕлĕкĕ айне
Йыхăрать вăл сынсене.

Курăкне ая сарать,—
Тутлă канăçлăх парать.

Уçă сывлăш халалать...
Ыр хуçа пек хăналать:

Мăйăрне те каттарать,
Кăмпине те таттарать...

Анчах çакă ырлăха
Хакламан çын та пур-ха.—

Çаптăрччĕ хытах паян
Вĕсене çак сăвă ман!—

Хăрăк тĕмĕсем айне
Вăл чĕртет-и кăватьне,

Типĕ çулçăсем çине
Ывăтать-и пирусне,—

Кăмрăк çеç юлать вара
Пархатарлă чăтлăхран...

* * *

Çавăтса кĕрем сана,
Вулаканăм, вăрмана.

Çĕршыва илем кӳрсе,
Акă вăл епле ӳсет—

Пирĕн таврари вăрман—
Хурăн, хыр, çăка, юман!..

Тилĕпе куян, упа
Хӳтлĕхне унта тупать.

Тилĕ тирĕ—çĕлĕклĕх,
Хурăн лăсĕ—милĕклĕх...

Калăпăр,—калакăн та,
Сĕтелпе пуканăн та,

Пĕренен те, вуттăн та—
Тĕп кил-йышĕ вăрманта.

Пĕренесĕр çурт пулмасть,
Çурчĕ вутсăр ăшăнмасть...

Тĕрĕс-текĕл каласан:
Йывăç тимĕрпе тăван.

Тупă хурçăран пулсан,
Кустăрми ун—йывăçран...

Çавăнпа та яланах
Эс упра çак вăрмана!

1940

# ПУП ПĔЛĔТ ÇИНЕ ÇĔКЛЕННИ

Генрих Гейне майлă

Пĕр çăткăн пуп, чăх вăррине кайсан,
Пуç-хĕрлĕ тăрăннă кашта çинчен.
Аманнă хайхискер: виç кун выртсан,
Вашлатнă мĕскĕн чунĕ ÿтĕнчен.

Хулсем çине çĕленĕ те çунат,
Тÿрех вăл лĕстĕртетнĕ пĕлĕте...
Çитес çĕре аран çеç çитнĕ те:
— Кĕртсемĕр,— тенĕ,— çылăхсăр чуна!

Вăл кĕтнĕ райрисем сас парасса,
Анчах чĕриклетмен рай алăкĕ,—
Çÿлти йăласене Çĕр курасран,
Каç тунă кăнтăрла рай халăхĕ.

Пуп кăшкăрнă татах — ответ пулман,
Хайхи пуçланă ÿлесех йĕме.
Вара часах, турткаласа йĕмне,
Пĕр шур сухалĕ тухнă алăкран.

Ку — Микул турӑ пулнӑ. Хапхана
Хуралҫӑна тӑратнӑ мӗн ӑна.
— Мухмӑр уҫма памаҫҫӗ пуль мана! —
Йӑсланӑ вӑл.— Кам ҫухӑрать кӑна?..

Лӑплан, канальйӗ! Кӳр, рая кӗме
Хут пур-и сан?.. Ах, ҫук-и?! Кӑлӑхах
Ҫул тытнӑ эс ҫӳлти патшалӑха...
Аминь. Тасал! Ан пыр хапха умне...

Ну, ну!.. Йӗрме кайран та ӗлкӗрӗн,
Тархасшӑн ан вӑрат атте-турра...
Кала эппин: кам ывӑлӗ-хӗрӗ
Пулатӑн эс? Ӑҫтан? Хӑш ҫӗршывран?

Миҫе хутчен авланнӑ? Арӑмна
Шанаттӑн-и е улталаттӑн-и?
Мӗнле ӗҫре ӗҫлеттӗн? Ҫӗршывна
Саваттӑн-и е ылханаттӑн-и?..

Халех анкета ҫырӑпӑр... Атту,
Мур пӗлет-и, такам шуйттанӗ эс.
Кала йӗркеллӗн, чӗптӗм те ан тун,
Суякана кунта ҫыхсах хӗнеҫ...

Аха, эс пуп апла! Хӑш приходран?
Куратӑп ҫӑткӑн алтӑр-куҫсене..
Пупсем, темме, сахалтарах райра, —
Тур-амӑшӗ савмасть тет вӗҫене..,

Сире ĕнтĕ кĕртме хушманччĕ те...
Шалу сахал илетĕп... Тен, кивçен
Кăшт памăн-ши?.. Çĕр манитпе çитет.
Тата кăштах хăналăн çийĕнчен...

Вот, вот... Рехмет! Анчах рая кĕрсен,
Ан тишкĕрех кунти йĕркесене;
Апостăлсем ăна-кăна сиссен,
Тӳрех чăмтарĕç тамăк хуранне.

Çакна ан ман,—райра закон пĕрре:
Йĕрес килсен те—ан йĕр, савăн çеç.
Малтанлăха сăра-эрех ан ĕç,
Какай ан çи... Урасана çӳре.

Херувимсем концерт-мĕн пуçласан,
Юн тухиччен ислет ал тупанне.
Кокардăллă çынна курсан-тусан,
Ан ман «превосходительство» теме.

Хăйне çапла хисеп туса чĕнсен,
Каçсах-каять Колчак; вăл халь райри
Хор дирижорĕ; ун шăнчас майри
Солистка, асăрха ытахальтен...

Ну вот, чуптар! Спасибо, те мана...
Рай сачĕ тунсăх пек туйăнсанах,

Тӳрех тухса чавтар ман хваттере,
Хуллен картла ҫаптарӑпӑр пӗрле..

Райра ҫӳренӗ чух тӗл пулӗ тен
Сана Христос. «Ӑҫтан?» тесе ыйтсан,
Суй нимӗн хумханмасӑр: «Эпӗ,—те,—
Ватиканран!»

1938–1940.

## ТУПМАЛЛИ:


стр.

Умсăмах . . . . . . . . . . . . . . . 3

I. ÇĂЛТĂР

Этем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Тăвана тупни . . . . . . . . . . . . . 10
Петро . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Вунвиççĕмĕш . . . . . . . . . . . . . 16
Пуртă . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
Çăлтăр . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Ялав . . . . . . . . . . . . . . . . . 20
Вăрçă витĕр . . . . . . . . . . . . . 21

II. КĂМĂЛ

Кăмăл . . . . . . . . . . . . . . . . 25
Пурнăç юлташне . . . . . . . . . . . 27
Халал . . . . . . . . . . . . . . . . 28
Кăмăл туртăмĕ . . . . . . . . . . . . 29
Юратсан . . . . . . . . . . . . . . . 30
Ăсату . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Савни . . . . . . . . . . . . . . . . 32
Тен ахаль мар . . . . . . . . . . . . 33
Çырлара . . . . . . . . . . . . . . . 34
Килмен саламсем . . . . . . . . . . . 35

| | стр. |
|---|---|
| Ача . . . . . . . . . . . . . . . . . . | 36 |
| Чĕмсĕрлĕх . . . . . . . . . . . . . . . | 37 |
| Икĕ сăвă . . . . . . . . . . . . . . . . | 38 |
| Ят хуни . . . . . . . . . . . . . . . . | 40 |
| Сăпка юрри . . . . . . . . . . . . . . | 41 |
| Çывăх тус . . . . . . . . . . . . . . . | 44 |
| Сăвă . . . . . . . . . . . . . . . . . | 46 |
| Канăç . . . . . . . . . . . . . . . . . | 47 |
| Кĕрхи сăвă . . . . . . . . . . . . . . | 48 |
| Сарă хĕр . . . . . . . . . . . . . . . | 49 |
| Ĕмĕт . . . . . . . . . . . . . . . . . | 52 |


III. ФЕЛЬЕТОНСЕМ


| | |
|---|---|
| «Станцăсемпе» «пристаньсем» . . . . . . | 55 |
| Пĕр-ик сăмах вăрман çинчен . . . . . . . | 57 |
| Пуп пĕлĕт çине çĕкленни . . . . . . . . | 59 |


4 О.Т.Ч.

Редактор *Стихван Шавлы.*

НТ 2995. Подписано к печати 15|IV—41 г. Тираж 3000 экз. Зак. № 219.
Печатных л. 2. Уч. авт. л. 2.

Отпечатано в тип. № 1 Упр. изд. и полиграфии при СНК ЧАССР,
гор. Чебоксары, Дом печати.

Цена 1 р. 70 к.

НЕСТЕР ЯНГАС

# ВТОРОЙ ПОДАРОК

*СТИХИ*

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

ЧУВАШГОСИЗДАТ • 1941